Сăмах – специалиста

# Выльăхсем çарана тухаççĕ

Ĕнесене улăх-çарана кăларасси – пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех ял çыннисемшĕн те чăтăмсăр кĕтнĕ вăхăт. Вĕсем çак тапхăр хăйсен килти хушма хуçалăх экономикишĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине, выльăхсен сывлăхĕшĕн усăллине, хуçалăхсен тĕрекне вăйлатма меллине ăнланаççĕ. Кунсăр пуçне выльăхсем çарана тухсан вите-сарайсене кантарма, вĕсенче юсав ĕçĕсем ирттерме пулать. Анчах ял çыннисен çак тапхăра хатĕрленнĕ май картара утă-улăм мĕн чухлĕ юлнине шута илни те ытлашши мар. Çакă выльăхсене симĕс курăк çине кăларса апатлантарăва улăштарнă вăхăтра уйрăмах кирлĕ, мĕншĕн тесен нумай хуçалăхра мăйракаллă шултра выльăхсем çава начарлансарах тухаççĕ. Çак вăхăтра кашни выльăхпах диагностика тĕпчевĕ, профилактика прививкисем, тĕрлĕ хуртсене эмел парса пĕтерес ĕçсем тата, ерекен чирсемпе кĕрешмелли плансемпе килĕшӳллĕн, ветеринарипе санитари мероприятийĕсем ирттермелле.

Ĕнесене улăх-çарана кăлармалли вăхăт çитнĕ май кĕтӳçсем хатĕрлесси пирки те манмалла мар. Çак тапхăр ăнăçлă иртгĕр тесен, кĕтӳçсен выльăхсене пĕрремĕш пулăшу пама пĕлмелле. Асра тытмалла: ĕнесене улăх-çарана кăларас умĕн агрономсемпе зоотехниксен çав вырăнсене пăхса тухса актпа хак памалла, пĕрле пулса çарансене темиçе ана çине пайламалла. Унпа черетпе усă курсан сĕт памалли ĕнесем валли тăтăшах çемçе курăк пулать. Улăх-çарана унта тĕрлĕ ăпăр-тапăр тулса ларсран тăтăшах пăхса тăмалла, вăхăтра тасатмалла. Унта наркăмăшлă япаласемпе минераллă удобрени миххисем пуласран питĕ сыхланмалла. Выльăхсем улăха тухмалли çулсене, вĕсем çинчи кĕперсене кая юлмасăр юсамалла, улăхсенчи шурлăхлă вырăнсене паллă тумалла, ĕнесене шăвармалли вырăнсене тирпейлемелле тата унти шыва ĕнесем тухиччен лабораторире тĕрĕслеттермелле.

Улăх-çарана тухас умĕн выльăхсем тĕлĕшпе ветеринарсемпе зоотехниксен тĕрĕслевне ирттермелле, вăйлăрах тăрантармалли выльăхсене уйрăм ушкăнсене пĕрлештермелле. Çулленхи практика çакна çирĕплетсе парать: ĕнесене хĕллехи рационтан (протеинпа чухăн та клетчаткăпа пуян) çуллахи сĕтеклĕ апат çине куçарнă тапхăрта вĕсен вар-хырăмĕ час-часах пăсăлать. Çавна пула сăвăм, сĕтри çу хисепĕ чакать. Çапла ан пултăр тесен, ĕнесене ир-каç çителĕклĕ утă-улăм памалла, макро- тата микроэлементсемпе, тăварпа тивĕçтерсех тăмалла.

Ĕнесене улăх-çарана хăнăхтарасси – васкамасăр пурнăçламалли ĕç. Малтанхи икĕ кунĕнче ĕнесене улăхра 2-3 сехетрен ытла çӳретмелле мар. Тепĕр эрнерен çак вăхăта 10-12 сехете çитерсен те юрамалла. Çак тапхăрта пăрутынашкасем, пăруламалли ĕнесем, хĕл каçа ытларах начарланнă тата чирлесе иртгернĕ выльăхсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулмалла. Çăва тухнă май выльăхсене симĕс апата майĕпен хăнăхтарса пыни продуктивлăха тивĕçлĕ шайра упраса хăварма пулăшать.



Ку тынашкисен те паян-ыран улăха тухма вăхăт ĕнтĕ.

Маларах каланине шута илсен, ĕнесене улăх-çарана кăларнă май кĕтӳçсем хатĕрлесси малти вырăна тухса тăрать. Куçару тапхăрĕнче кĕтӳçсен ĕнесене пĕрремĕш пулăшу пама пĕлмелле. Çакна валли вĕсене медицина аптечкипе, троакарпа, ытти хатĕрсемпе тивĕçтермелле тата вĕсемпе усă курма вĕрентмелле. Хăй ĕçне лайăх пĕлекен кĕтӳç – зооветспециалистсемшĕн пысăк тĕкĕ.

Кĕтӳç кĕтӳçпе те, анчах выльăхсене улăх-çарана кăларнă тапхăрти пĕлтерĕшлĕ профилактика мероприятийĕсенчен пĕри вăл – выльăхсене çĕпĕр язвинчен, эмкартан, ытти инфекциллĕ чирсенчен вăхăтра вакцинăласси. Прививкăсене мăйракаллă шултра выльăхсене, сурăхсемпе качакасене, лашасене çур çул хушăпа çулталăкне икĕ хут тумалла: малтан çуркунне выльăхсене çарана кăлариччен, кайран – выльăхсене витене хупнă чух. Эмкартан выльăхсене улăха илсе тухиччен 2 эрне маларах профилактика тумалла (çак вăхăтра активлă иммунитет çирĕпленет). Улăха тухакан ĕнесен чĕрнисене, шĕвĕр мăйракасен вĕçĕсене касмалла.

Выльăхсене улăх-çаранта çӳретес тапхăр вăл – йӳнĕрех хăй хаклăхпа ытларах продукци илмелли, кунпа пĕрлех вите-сарайсене çитес хĕле хатĕрлемелли вăхăт. Çакна шута илсе выльăхсене кĕтĕве е çуллахи лагерьсене кăларсан, пĕрремĕш кунранах вите-сарайсене çитес хĕле хатĕрлеме пуçламалла. Ăшă çу кунĕсем хăвăрт иртĕç. Кĕр еннелле вара ĕçсем хушăнсах пырĕç.

**А. ФЕДОРОВА,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ветврачĕ.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май

# Çĕнтерӳ çулĕнчи йĕркесем



Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!
2-мĕш çул тухать
Колхозник сасси
1945 май 13 вырсарникун 19 (52) № Хакĕ 15 пус.
ВКП(б) Муркаш Райкомĕпе ĕçхалăх депутачĕсен район Совечĕн хаçачĕ

Район хаçачĕ 1944 çулхи май уйăхĕнчен тухма тытăннăранпах вулакансене Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин страницисемпе паллаштарса тăнă. Кашни номерте – çĕнĕ информаци, пуринче тенĕпе пĕрех «Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче» ятлă кăларăм пулнă. Икĕ страницăран тăракан «Колхозник сасси» 1200 вулакан патне эрнере пĕрре çитнĕ.

Ман умра – «Колхозник сассин» 1945 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче тухнă номерĕ. Акă пĕрремĕш страницăра вырăн тупнă пĕр материал. «Пирĕн земляксем» рубрикăпа «Тăван çĕршывшăн» ятпа пичетленнĕ вăл. Вуласа пăхма пурне те интереслĕ пулĕ. Текстра нимĕн те улăштарман.

**«Тăван çĕршывшăн**

**Пин те тăхăр çĕр хĕрĕх пилĕкмĕш çул, аслă трагедин юлашки çулĕ, гитлерла Германин юлашки çулĕ пулĕ.**

**Илья Эренбург.**

**Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче нимĕç захватчикĕсене хăйсен шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкассишĕн чăваш халăхĕн нумай пин ывăл хĕрĕсем паттăрăн кĕрешеççĕ. Вĕсен чаплă ĕçĕсем çинчен фронтран килекен çырусем уçăмлăн кăтартса параççĕ. Акă пирĕн умра пĕр полевой почтăран килнĕ çыру.**

**...Финсен заливĕнчи утравсемшĕн хаяр çапăçу пынă. Тăшман енчен улаула вĕçсе килекен минăсем темиçе утăмра ӳке ӳке çурăлнă. Осипов командирăн катерĕ противникăн огневой точкисене пĕтерме тапранчĕ. Противникран 200 метртра краснофлотец Николай Иванов тăшман çине вĕçĕмсĕр вутхĕм сапма тытăнчĕ. Вăйлă та хаяр çапăçу пĕр чарăнмасăр яра куна пынă.**

**Фашистсен самолечĕсем шыв хĕрне вĕçсе пырса, катер çине атакăна тухрĕç.**

**Командир Осипов юлташ сăнаса тăма аван пултăр тесе, рубкăран тухса, кораблĕ хăюллăн тытса пырать. Çав вăхăтрах вăйлă взрыв пулнипе, çӳлти палубăра пулнисем, шыва сирпĕнеççĕ. Вĕсен шутĕнче кăнтăрлахи çапăçура аманнă Николай Иванов та пулнă.**

**Иванов юлташ юлашки вăйне пухса, çак вăхăтра юратнă командирĕпе юлташĕсене шывран çăлса кăларать.**

**Краснофлотецăн чысне вăл яланах çӳлте тытса тăрать. «Ху вилсен те, юлташна çăл» текен краснофлотецăн йĕркине яланах асра тытать.**

**Вăрçă фронтĕнче Иванов юлташ хăйĕн паттăрлăхĕпе хăюллăхне пĕр хут кăна мар кăтартса панă. Вăрçăра вăл 1941 çултанпа çапăçать. Çĕнтерӳ çулĕ ăна тăшман йăви патне çитмелли çул патне çитерчĕ.**

**Унăн кăкрине Хĕрлĕ Ялав орденĕпе «За Отвагу», «За оборону Ленинграда» медальсем илемлетсе тăраççĕ.**

**Николай Иванович Иванов Муркаш районĕнчи Хыймала ял Советĕнчи Лапракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1940 çулччен вăл Ишлей районĕнче çуртйĕр техникĕ пулса ĕçленĕ.**

**Мухтав та чыс хамăр земляка!»**

**Ф. МАРКОВ.**

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Ялти ятлă çынсем

# Ачалăхсăр, çамрăклăхсăр

Хорнуй ял тăрăхне кĕрекен Шаптак ялĕнче сакăр вуннăран иртнĕ кинемейсем чылай. Хăйсен пурнăç çулĕнче вĕсем терт-нушине сахал мар курнă, вăрçă вăхăтĕнче аслисемпе пĕрле чăтăмлăн ĕçленĕ.

Халĕ вара ман сăмахăм Екатерина Ефимовна Илларионова çинчен. Тĕлĕнмелле кинемей вăл: мĕн чухлĕ ырăлăх, сăпайлăх, ачашлăх унра. Питĕ тирпейлĕ те çепĕç кăмăллă. Çав вăхăтрах шӳтлесе илме те юрататать.

Нумай пулмасть Екатерина Ефимовна хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Вăл 1929 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче кун çути курнă. Нумай ачаллă хресчен çемйинче ӳснĕ Екатерина Ефимовна. Чи кĕçĕнни – ачашши, тенĕ халăхра, анчах, кĕçĕнни пулсан та, Екатеринăн ачашланса ларма май та, вăхăчĕ те пулман çав. Икĕ аслăрах аппăшĕ пĕчĕклех чирлесе вилеççĕ. Амăшĕ вара ăна çăм арлама, чăлха-нуски çыхма, тутлă кукăль пĕçерме – пур ĕçе те вĕрентет. Мĕн ачаранпах çĕр ĕçĕнче пилĕк авса ĕçлесси те Екатеринăн шăпиех пулса тухать.

Хĕр ачан шкулта питĕ вĕренес килнĕ. Анчах та тӳр килмен. Тăхăнмалли, çимелли çителĕклĕ пулманран парта хушшине ларса курайман вăл. Шкула вĕренме çӳреймесĕр ĕçе кӳлĕннĕ, аслă пиччĕшĕсем çи-пуç çуккине пăхмасăрах вĕренĕве малалла тăсасшăн тимленĕ. Тăваттăн пулнă вĕсем: Яков, Михаил, Порфирий тата Петр. Вăрçă пуçланиччĕнех аслисен салтака кайма повестка килет. Яковпа Порфирий Тăван



Пĕрле пухăнсан, калаçмалли нумай.

çĕршыва сыхлама тухса каяççĕ. Киле килмелли çул шăпах хаяр вăрçă пуçланать. Михаил та вăрçа тухса каять. Вăл ун чух Горький облаçĕнче ĕçленĕ пулнă, вăрçа кайни çинчен çырупа çеç çырса пĕлтерет килне. Çав вăхăтра Петр Муркаш шкулĕнче учитель пулса ĕçленĕ. Вăл Екатеринапа пĕрле окоп чавнă çĕре тухса каять. Амăшĕн чĕри мĕнле чăтнă-ши? Кашнине ăсатнă чухне вăл хапха умне выртсах йĕрсе юлнă. «Çапла пуçланса кайрĕ йывăр та хуйхăллă тапхăр», – аса илет Екатерина Ефимовна.

Вăл, пĕчĕклех ĕçе вĕреннĕскер, пуринпе танах ĕне-вăкăр кӳлсе ака-суха тунă, сӳреленĕ, акнă, çурлапа тырă вырнă, йывăç турттарнă... Кашни кун колхозра ирттен пуçласа сĕм тĕттĕмччен ĕçленĕ. Ĕçрен таврăнсан та салтаксем валли алса-чăлха çыхнă. Ачалăх мĕнне пĕлмен, çамрăклăх курман.

Амăшĕ килти ĕçсене пурнăçланă, ашшĕ, сывлăхĕ хавшак пулнă пулин те, колхозра тăрăшнă. Ывăлĕсенчен пĕр çыру та илеймеççĕ вĕсем, вăрçă пĕтсен те ывăлĕсене кĕтсе илеймеççĕ. Пĕр çемьерен вăрçа кайнă тăватă ывăл пĕрин хыççăн тепри хыпарсăр çухалаççĕ.

Вăрçă пĕтни нумай вăхăт та иртмест, Екатеринăн 50 çулхи ашшĕ йывăр чирленипе пурнăçран уйрăлать. Пĕтĕм йывăр ĕç çамрăк хĕр çине тиенет. Хуçалăха тытса тăмалла – укçи çитмест, çав вăхăтра тата уйăхсерен налук пуçтарса çӳренĕ. Ăна тӳлейменшĕнех сарайпа амăрне те сӳтсе тухса кайнă налук пуçтаракансем. Выльăх усрама вырăн та пулман. Аран укçа çитерсе юн пасарĕнче такапа сурăх улăштарса пăру туянать Екатерина. Ăна виçĕ çул тĕп сакайĕнче усраççĕ, хыççăн – çĕр витере. Кайранрах куккăшĕ сарай тума пулăшать. Колхоз ĕçĕнчен юлманран килти ĕçсене каçхине, ывăннине пăхмасăрах, пурнăçлама тивнĕ. Амăшне йывăр ĕçлеттермен хĕр. Ăна пăрахса каяйманран качча та тухман.

«Çак куна çитиччен пурнăçри йывăрлăха сахал мар куртăм», – тет Екатерина Ефимовна. «Аçу çук, пиччӳсем çук – никампа та хăратаймăн», çак сăмахсенчен йывăрри пулман та ман пурнăçра», – уçса парать чунне кинемей.

Хăйĕн тӳрĕ кăмăлĕпе, хастарлăхĕпе ялта ырă ят илтнĕ Екатерина Ефимовна Илларионова. Ашшĕпе амăшĕн, пиччĕшĕсен, тăванĕсен ятне яман. Нумай Хисеп грамоти илме тивĕç пулнă, юбилей медалĕсем те сахал мар унăн.

Темĕнле йывăр пулсан та, эсир чун илемлĕхне çухатман, пуç усман, Екатерина Ефимовна. Эпир сирĕн умăрта парăмра. Тата нумай çул пурăнмалла пултăр сирĕн, сывлăхлă пулăр.

**М. НИКОЛАЕВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Аннесем, аннесем...

Аннесем, аннесем, мĕншĕн макăратăр?
Е хăрушă вăрçăна халь те асилетĕр?
Аттесем вăрçа кайсан пурнăç йывăр пулнă,
Аттесем унта вилсен, эсир тăлăх юлнă.
Хуйхă каснă чĕрене, йĕр хăварнă пит çине.

Аннесем, аннесем, вăхăт çитрĕ савăнма!
Мирлĕ ырă пурнăçра пултаратпăр халь канма.
Çавăнпа та, аннесем, эп ыйтасшăн сирĕнтен:
Мăнуксен çара кайма вăхăтпа черет çитсен,
Ан юлсамăр пит йĕрсе, пилĕр пултăр «мир» тесе.

**З. ЯГУНОВА.**

Çул-йĕр çинче

# «Катаччи» кюветра вĕçленнĕ



Апрелĕн 17-мĕшĕнче, çĕрлехи пĕр сехет тăлĕнче, виçĕ хĕрпе икĕ каччă «чăнкă» машинăпа «катаччи» чупас тенĕ. Анчах та вĕсен çулĕ такăр пулман çав. «Атăл–«Гигант»–Мăн Сĕнтĕр» çул çинчи хăрушсăрлăха сыхланă ГИБДД сотрудникĕ машинăна чарма ыйтсан, водитель хăвăртлăха татах та пысăклатнипе машина малалла ыткăннă. Пысăк хăвăртлăхпа кайни вара машина кювета ӳпĕннипе вĕçленнĕ.

Кораккасси каччин транспортпа çӳреме ирĕк паракан право та пулман. Çакна пулах машинăна чарма шутламан вăл. Халĕ вара машинăра пулнă хĕрсемпе каччăсем пурте Мăн Сĕнтĕрти больницăра суранĕсене сиплеççĕ.

Сурансем юсанса çитнĕ тĕле «водителĕн» ĕçне районти çул çитмен çамрăксен тата вĕсене хӳтĕлекен комиссинче пăхса тухмаллах пулĕ. Ашшĕн вара, саккунпа килĕшӳллĕн, çул çитмен ывăлне «руль тыттарнăшăн», штраф тӳлесси те куçкĕрет.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**районти çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: çамрăксем çак машинăпа инспекторсен машинин хăвăртлăхне «тĕрĕсленĕ».**